


## Районăн харсăр çыннисем

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Ĕмĕрне сывлăх сыхлавĕнче ирттерет

Пирĕн районти сыватупа профилактика учрежденийĕсен йышне 72 койка-вырăнлă (22-шĕ кăнтăрлаччен пулмалли вырăн) больница, сменăра 200 çын йышăнакан поликлиника, 12 вырăнлă 6 врач амбулаторийĕ, стационарăн килти икĕ вырăнĕ, поликлиникăри пĕтĕмĕшле практикăллă врачăн уйрăмĕ, 18 ФАП кĕрет. Сывлăх сыхлавĕнче 218 çын ĕçлет, çав шутра 29 врач (26-шĕ тĕп больницăра) 118 медицина сестри тата тĕрлĕ ĕçсене пурнăçлакан 71 çын. 2019 çулта Тăвайри тĕп больница 495730 тенкĕлĕх оборудованипе инвентарь илнĕ.

Тăвай ен çыннисем ытларах юн çаврăнăш чирĕпе аптăранипе пурнăçран уйрăлаççĕ иккен. Асăннă сăлтава пула пĕлтĕр 93 çыннăн (38,5 процент) чĕри тапма чарăннă, виçĕмçул – 70 çыннăн (34,3 процент).

Районти медицина ĕçченĕсен харсăрлăхĕпе паллашма, çак кунсенче пирĕн пата Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Владимир Степанов килнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Владимир Ванеркепе тата Тăвайри больницăн тĕп врачĕпе Татьяна Игнатьевапа пĕрле вĕсем сывлăх хуралĕнче тăрăшакансен ĕç укçийĕ, коммуналлă тӳлевсем пирки ыйтусем хускатнă, кадрсем çитменнине те палăртнă.

–Пирĕн больницăра карантин кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче пуçланнă, сипленекен çынсемпе хутшăнассине чакартăмăр чир-чĕр сарăласран сыхланса. Паянхи куна пурĕ Тăвай енри 51 çын сиплев учрежденийĕнче выртса тĕрлĕ процедурăсем витĕр тухать, 41-шĕ – терапи уйрăмĕнче.

Эпир чирлессинчен пăрăнса иртме пултаратпăр. Хамăрăн алăра пирĕн сывлăх. Çавăнпа пурин те сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалла, пирус туртмалла мар, эрех-сăра таврашĕпе иртĕхме юрамасть. Таса апат çимелле, вăй-хал ĕçне пурнăçламалла, уçăлса çӳремелле. Çапла майпа вара чир-чĕр пуçланма пултаракан вăхăта каяраха хăварма пулать,–районти сывлăх сыхлавĕнчи лару-тăрупа кĕскен паллаштарчĕ Татьяна Дмитриевна.

Виççĕмĕш хутра вырнаçнă терапи уйрăмĕ. Тасалăхпа тирпейлĕх хуçаланать кунта, ăшă. Ирхине тăхăр сехет çитеспе чирлĕ çынсем çăвăнса тасалнă, укол тутарнă, эмел ĕçнĕ, апатланнă, коридор тăрăх çӳрекенсем те пур. Хăш-пĕри сывлăх сунса иртет.

–Вера Сергеевна пур-ши?–интереслентĕм сĕтел хушшинче питĕ тимлесе çыракан Инесса Егорова медсестраран.

–Пурччĕ-ха. Киле каймасть та тейĕн вăл, хĕрĕх çул ытла ĕнтĕ ыттисенчен малтан çитет больницăна, ĕç тумĕ тăхăнсанах пациенчĕсем хăйсене мĕнле туйнипе интересленме пуçлать,–хуравларĕ çамрăк хĕрарăм.

**«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 1725,9 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕ шайĕнче федерацин 8 проекчĕ пурнăçланать.**

**Наци проектне пурнăçлани Раççейре пурăнакансемшĕн медицина пулăшăвне меллĕрех те пысăк пахалăхлă тума тивĕç. Çынсем кашни çулах профилактика тĕрĕслевĕпе диспансеризацине хутшăнни нумай йывăр чире вăхăтра асăрхаттарма пулăшĕ. Малтанхи профилактика тĕрĕслевне çулсеренех çынсен 70 проценчĕ таран явăçтарма задача лартнă. Хальхи вăхăтри клиника сĕнĕвĕсем тата сиплев протоколĕсене çĕнетсе пыни пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвне регионсенче меллĕрех тума май парĕ. Медицина ĕçченĕсен квалификацине ӳстерсе пыни отрасле ăста кадрсемпе тивĕçтерме пулăшĕ. Медицина инфраструктурине лайăхлатса пыни, медицина пулăшăвĕн пахалăхне ӳстерни, çынсем хăйсен сывлăхне ытларах тимлĕх уйăрма тытăнни чĕрепе юн тымарĕсен тата усал шыçă чирĕсене пула вилнисен шутне чакарма май памалла. 2024 çул тĕлне Раççейре пурăнакансен пурнăç тăршшĕ вăтамран 78 çула çитмелле.**



–Епле çĕр каçрăр, мĕнле туятăр хăвăра?–текен ыйтупа пуçларĕ ирхи тишкерĕве терапи уйрăмĕн заведующийĕ Вера Семенова.

–Сывалса пыратпăр эсир пулăшнипе,–хуравларĕç тăххăрмĕш палатăра выртакансем. Паллашрăмăр, Зоя Морозова, Раиса Автина, Людмила Львова процедурăсен курсĕпе кăмăллă, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмлă. Пĕринпе ăшшăн калаçрĕ обходра çав кун Вера Сергеевна, теприн юн пусăмне виçсе пăхрĕ, виççĕмĕшĕн пĕверĕ мĕншĕн ыратма чарăнманнипе кăсăкланчĕ. Вăхăт самаях иртет çапла, чĕре мĕнле тапнине те итлесе пăхмалла, чирлекенсене лăплантарма та пĕлмелле, тивĕçлĕ сĕнӳсем памалла тата ытти те. Нумайранпа сывлăх сыхлавĕнче тимлесе хисепе тивĕçлĕ пулнă Алексей Николаевич Чернов неврологпа пĕрле тĕрĕслеççĕ вĕсем çапла палатăсенчи çынсене. Иккĕшне çăмăл мар, хăйсен йышне тепĕр специалист хушăнасса шанаççĕ.

Обход вĕçленсен ординатор пӳлĕмĕ умĕнче кĕтекенсене те вăхăт уйăрчĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Вера Семенова, сывлăхшăн малашне те çапла тимлеме сунса ăсатрĕ вĕсене.

Медицина ĕçченĕн тĕрлĕ хут, документ çырмалли тапхăр пуçланчĕ кĕçех. Çав вăхăтра хăйĕн пурнăçĕпе паллаштарма та пултарчĕ.

Удмурт республикинчи Селтынск районĕнчи Шаклей ятлă ялта 1952 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче служащисен çемйинче çут тĕнчене килнĕ иккен вăл, вырăсла сăпайлăн пуплет хĕрарăм.

–Пирĕн ялта хăйĕн ĕçне питĕ юратакан фельдшер ĕçлетчĕ. Манăн та ун пекех хисеплĕ специалист пулас килетчĕ,–калаçăва малалла тăсать шурă халатлă работник.

Ижевскри патшалăх медицина институтне çул тытнă вара вăл 1969 çулта. «Сиплев ĕçĕ» факультетран 1975 çулта аслă пĕлӳ илсе тухнă. Чăваш Республикинчи Канаш хула больници çумĕнчи интернатурăра пĕр çул ĕçлесе вĕреннĕ.

Харсăр çамрăк специалиста 1977 çулта пирĕн районти тĕп больницăна ĕçлеме янă. Çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пултаракан Вера Сергеевнана тепĕр çултанах коллектив ĕçне йĕркелесе пыма шаннă. Ертӳçĕсен сĕнĕвне тӳрре кăларнă харсăр хĕрарăм, паянхи кунччен сывлăх сыхлавĕнче пуçарулăх кăтартать.

Чи аслă категориллĕ врача «СССР сывлăх сыхлавĕн отличникĕ» Знакпа, СССР Президиумĕн Аслă Канашĕн Хисеп грамотипе тата ытти наградăсемпе чысланă, «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» хисеплĕ ят панă.

Пурĕ 43 çул хăйĕн сăваплă ĕçне çӳллĕ шайра пурнăçласа пырать В.Семенова врач.

Мăшăрĕпе, Владимир Ивановичпа, икĕ хĕр çитĕнтернĕ. Елена сывлăх сыхлавĕнчи ĕç династине малалла тăсать. Ольга – экономист. Иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илнĕ. Куç тулли мăнукĕсем савăнтараççĕ халь Семеновсене.

–Хăвăрт иртет пурнăç, хĕрĕх ытла çул хыçа юлчĕ те ĕçлеме пуçланăранпа. Врач – професси кăна мар, эпир тытса пыракан пурнăç йĕрки те, терапевт вара – чун туртăмĕ, Турă шанса панă пархатар.

Çынсене манăн, чи малтан, сывлăх пирки куллен шухăшлама сĕнес килет. Упрăр хăвăра, çитĕнӳсем патне ăнтăлăр,–шухăшне вĕçлерĕ Вера Сергеевна.

Пĕлĕвне ӳстерекен курсра та тăтăшах пулать аслă категориллĕ врач. Чăваш Республикин 100 çулхи юбилейне пысăк хавхаланупа кĕтсе илет районăн харсăр çынни, кăмăллă ĕçтешĕсемпе юнашар ĕçлеме май килнĕшĕн шăпине тав тăвать.

**А.НИКИТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Тăвайри тĕп больницăри В.Семенова врач ĕçре.**

**Министрсен Кабинечĕн ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев ертсе пынипе иртнĕ ларăвĕнче республикăн 2020 çулхи тата 2021, 2022 çулсенчи планпа пăхнă тапхăрти бюджечĕ çинчен калакан саккуна кĕртмелли улшăнусене ырланă. 2020 çулта медицина отрасльне 1,1 миллиардлăх хушма укçа-тенкĕ уйăраççĕ. Çав шутра 0,9 млрд тенки республика бюджетĕнчен.**

**Асăннă суммăн çуррине (0,65 млрд тенкĕ) медицина организацийĕсен пурлăхпа техника базине çирĕплетме яраççĕ.**

**Кăçал сывлăх сыхлавĕнчи тăкак 22,9 млрд тенкĕпе (2019 çулхинчен 6 процент нумайрах) танлашать.**

**125 миллион тенкине медицина организацийĕсене тĕпрен юсама уйăрĕç, пысăк технологиллĕ оборудованисем туянма – 376 миллион тенкине, çĕнĕрен юсанă уйрăмсене сĕтел-пуканпа тивĕçтерме 97,8 млн тенкĕ тăкаклĕç.**

**Коронавируслă инфекци ан пуçлантăр е ан сарăлтăр тесе ирттерекен санитарипе профилактика мероприятийĕсем валли 49,6 млн тенкĕ уйăрĕç.**

**Чăваш Енре пурăнакансене валли хаклă препаратсемпе тивĕçтерме 204,5 миллион хушма укçа-тенкĕ пăхса хăварнă.**

**Регионти юн тымарĕсен центрĕн ĕçне çĕршывра чи малтисен йышăнче, 2008 çулта йĕркеленĕ. Унăн тата Канашри, Çĕмĕрлери, Çĕнĕ Шупашкарти, Улатăрти, Шупашкарти больницăсенче уçнă çакнашкал 7 уйрăмăн тĕп тĕллевĕ – миокард инфаркчĕ тата инсульт пулнă çынсене тĕнчери паха опыта тĕпе хурса медицина пулăшăвĕ кӳресси, диагностика сиплев мелĕсене лайăхлатса пырасси, реабилитаци мероприятийĕсене май килнĕ таран хăвăртрах пуçласси тата малалла тăсасси, Чăваш Республикинче пурăнакансем чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене пула вилессине чакарасси. Çавăн пекех гриппа кĕрешессине те тимлĕхсĕр хăвармаççĕ.**

**Чăваш Енре 2020 çулăн тăххăрмĕш эрнинче ОРВИпе тата гриппа чирленĕ 6508 тĕслĕх регистрациленĕ, чирлеслĕх кăтартăвĕ 100 пин çын пуçне 532 чирлекенпе танлашнă. Малараxри эрнеринчен 20,8 процент сахалрах ку. Грипа хирĕç прививка туни те витĕм кӳнĕ паллах, палăртнă сезонра 556 пин çынна (республикăри халăхăн 45,5 процентне) укол тунă.**